28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 июнь 24 вырсарникун 121 (6872) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн XII-мĕш сессийĕ

Информациллĕ пĕлтерӳ

ССР Союзĕн Верховный Совечĕн 1945 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчи ларăвĕ çинчен

Ĕнер, июнĕн 22-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Кремльре, СССР Верховный Совечĕн ларусен залĕнче, ССР Союзĕн Верховный Совечĕн XII-мĕш сессийĕ уçăлчĕ.

Ложăсене СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **И. В. Сталин** юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем тата СССР Союзĕн правительство членĕсем пырса кĕрсен, сессие пухăннă çынсем вĕсене тăвăллăн, нумайччен чарăнмасăр алă çупса кĕтсе илнĕ.

Председатель сĕтелĕ хушшинче: Союз Совечĕн Председателĕ **А. А. Андреев** юлташ, Национальноçсен Совечĕн Председателĕ **Н. И. Шверник** юлташ тата вĕсен заместителĕсем — **Д. Л. Лысенко, У. Юсупов, Ч. А. Асланова, М. В. Кулагин** юлташсем.

Председатель пулса ертсе пыракан **А. А. Андреев** юлташ çапла пĕлтерет: ССР Союзĕн Совнаркомĕ СССР Верховный Совечĕн XII-мĕш сессинче «Ватăрах çынсене Хĕрлĕ Çартан киле ярасси çинчен» калакан закон проектне пăхса тухма тăратать.

П. И. Селезнев депутат сĕннĕ тăрăх, ССР Союзĕн Верховный Совечĕ пурте пĕр саслă пулса сессин кун йĕркине çак ыйтăва кĕртет.

И. Ф. Зименков депутат сĕннĕ тăрăх, Союз Совечĕ тата Национальноçсен Совечĕ кашни палата хăйне уйрăмăн сасăласа «Ватăрах çынсене Хĕрлĕ Çартан киле ярасси çинчен» калакан закон проектне çак йĕркепе пăхса тухма йышăнаççĕ:

Ватăрах çынсене Хĕрлĕ Çартан киле ярасси çинчен калакан доклада Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче итлес. Доклад тăрăх пулас пренисене те тата закона йышăнассине те Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнчех туса ирттерес.

«Ватăрах çынсене Хĕрлĕ Çартан киле ярасси çинчен» Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй штабĕн начальникĕ арми генералĕ А. И. Антонов доклад турĕ.

А. И. Антонов юлташăн доклачĕ пĕтнĕ хыççăн Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ хупăнчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ арми генералĕ А. И. Антонов ватăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен тунă доклад

Депутат юлташсем!

Совет халăхĕ нимĕç империалисчĕсене хирĕç, Совет Союзне вăрă-хурахла тапăнăкерсене хирĕç туса пынă Отечественнăй аслă вăрçă эпир пусĕпех çĕнтернипе вĕçленчĕ. **(Нумайччен алă çупаççĕ).** Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ вăйлă та чее тăшмана хирĕç пынă вилĕмлĕ кĕрешӳре Тăван çĕршывăн чыслăхне, ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕç.

Гитлерла Германие—агрессин Европăри тĕп вучахне—тĕппипех аркатса тăкнă. Хĕрлĕ Çар тата пирĕн союзниксен çарĕсем унăн хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕтерсе лартрĕç. Гитлерла çарсене пĕтерсе тăкнă е тыткăна илнĕ, вĕсен çар техникине тимĕр-тăмăр купи туса хунă, е вăл трофей пулса пирĕн алла е союзниксен аллине кĕрсе ӳкрĕ. Хĕрлĕ Çар тата пирĕн союзниксен çарĕсем татăклă наступленисем туса пынине пула, тăшманăн пĕтĕм территорине йышăнса илнĕ. Германи хăйĕн çар промышленноçне, горючипе стратегиллĕ чĕртавар çăлкуçĕсене çухатрĕ. Германин государство тата çар управленине аркатса тăкнă. Нимĕçсен çар машинине тĕпренех аркатса тăкнă. Хирĕç тăмалли майсене çухатнă Германин пĕр сăмахсăрах парăнмалла пулчĕ.

Кăçалхи майăн 9-мĕшĕнче, Çĕнтерӳĕн историллĕ кунĕнче, Сталин юлташ халăха чĕнсе çапла каларĕ:

«Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас тесе эпир тунă аслă жертвăсем, вăрçă пынă вăхăтра пирĕн халăх тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсемпе хĕнхурсем, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварас тесе тылра тата фронтра хĕрӳллĕн ĕçлени,—çаксем пурте ахаль пулмарĕç, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтернипе вĕçленчĕç. Славян халăхĕсем, хăйсен пурнăçĕшĕн, хăйсен никама пăхăнманлăхĕшĕн ĕмĕрсем хушши туса пынă кĕрешӳ нимĕç захватчикĕсене тата нимĕç тиранине çĕнтернипе пĕтрĕ.

Паянтан пуçласа Европа çинче халăхсен ирĕклĕхĕн тата халăхсем хушшинчи мирĕн аслă ялавĕ ялкăшса тăрĕ».

Германи империализмне хирĕç пынă кĕрешĕвĕн тĕп йывăрлăхĕсем пирĕн Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар çине ӳкни пуриншĕн те паллă. Çакă ĕнтĕ пирĕн çĕнтерӳе татах та мухтавлăрах тăвать.

Отечественнăй аслă вăрçă тăршшĕнче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фрончĕ яланах кĕрешĕвĕн татăклă фрончĕ пулнă. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче нимĕç командованийĕ хăйĕн тĕп вăйĕсене тата хăйĕн çар техникин чи лайăх пайне тытнă. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче нимĕç çарĕн тĕп кадрĕсене тата тăшманăн çар техникин тĕп массине пĕтерсе тăкнă.

Чуралантарнă Европăна фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн пынă кĕрешӳĕн тĕнчери историне пирĕн государствăпа Хĕрлĕ Çарăн аслă ĕçĕ—Германи империализмне аркатса тăкас ĕçри тĕп вăйăн аслă ĕçĕ—мухтавлăн кĕрсе юлать.

Пирĕн историллĕ çĕнтерӳсен çăлтавĕсем мĕнре-ха? Вĕсем çаксем пулаççĕ: пирĕн социализмлă стройăн никам çĕнтерейми вăйĕ, пирĕн халăхăн патриотизмĕ тата мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ, Хĕрлĕ Çарăн никам çĕнтерейми хăвачĕ, пирĕн большевиксен партийĕн хавхалантаракан тата организацилекен вăйĕ, Сталин юлташ государствăна тата вăрçă ĕçне гениллĕ ертсе пыни. **(Тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Сталин юлташа чыслаççĕ).**

Хĕрлĕ Çар çапăçнă вăрçă фрончĕ Çурçĕрти Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕсе çитнех тăсăлса выртнă, вăл Кавказ тăвĕсем патнех çитнĕ.

Çав условисенче совет халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлес ятпа, курайман тăшмана аркатса тăкас тесе, пирĕн государствăн, темĕн чухлĕ этем вăйне тата материальнăй ресурссем мобилизацилесе Хĕрлĕ Çара хăватлă вăй туса хумалла пулнă. Вăрçă чарăннă вăхăтра, мирлĕ тапхăртипе танлаштарсан, Хĕрлĕ Çар составĕнче дивизисен хисепĕ тăватă хут ытларах пулнă. **(Алă çупаççĕ).**

Анчах та хальхи вăхăтри вăрçăра çĕнтерӳ тумашкăн пысăк çар кăна пулни çителĕксĕр-ха. Иртнĕ вăрçă вăл моторсен вăрçи, массăллă тĕрлĕ техникăн вăрçи пулнă. Хĕрлĕ Çар вăл хăй пысăк çар пулнă пирки кăна мар, тата вăл техника тĕлĕшĕпе хисеп енчен те, пахалăх енчен те хальхи вăхăтри вăрçа тивĕçлĕ хĕçпăшалланнă пирки, хăй умне пирĕн Правительство тата Верховный Главнокомандовани кăларса тăратнă задачăсене татса пама пултарчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн хальхи вăхăтри, нумай хисеплĕ тата хăватлă артиллери пур. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вăл, мирлĕ вăхăтрипе танлаштарсан, пилĕк хут ытларах ӳсрĕ.

Фашистла нимĕç çарĕсем, Совет Союзне вăрă-хурахла тапăннă вăхăтра, танксен хисепĕ тĕлĕшĕнчен чылай вăйлăрах пулнă. Çак тăшман вăйлăрах пулнине пĕтерес тесе, пирĕн танк промышленноçĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле пулнă.

Вăрçă пынă май пирĕн хальхи вăхăтри танксен хисепĕ, мирлĕ вăхăтри çавăн пек танксен хисепĕпе танлаштарсан, вунпилĕк хут ӳсрĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Çапăçу хирĕсенче çакă ĕнтĕ лару-тăрăва пире майлă татăкланах çаврчĕ. Сталин юлташ кăларса тăратнă задачăна —«танксем тĕлĕшпе нимĕçсем маларах тăнине пĕтерсе лартма тата çапла тунипе пирĕн çарăн положенине тĕпренех лайăхлатма» кирлине ăнаçлăн татса панă. Кунсăр пуçне, пирĕн çар промышленноçĕ вăрçă вăхăтĕнче хăй тĕллĕн çӳрекен йывăр тата çăмăл артиллерие çĕнĕрен турĕ. Вăрçăн иккĕмĕш çур пайĕнче ĕнтĕ çапăçу хирĕсенче пирĕн танксемпе хăй тĕллĕ çӳрекен артиллери тăшмантан вăйлăрах пулчĕ. Çакă ĕнтĕ пире оперативнăй анлă маневрсем тума, тăшманăн пысăк группировкисене çавăрса илме, ăна тĕппипех пĕтерсе тăкиччен хăваласа пыма май пачĕ.

Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче сывлăшри кĕрешӳ те пирĕншĕн йывăрччĕ. Самолетсем тĕлĕшпе ун чухне тăшман пирĕнтен чылай вăйлăрах пулнă. Вăрçăн иккĕмĕш çур пайĕнче вара, пирĕн авиаци промышленноçĕ аталанса вăйлăланнине пула, сывлăшри вăй-хăват тĕлĕшпе татăклă улшăнусем тума пултартăмăр. Сывлăшра эпир вăйлăрах пулса тăтăмăр. Пирĕн самолетсен хисепĕ, вăрçă пуçламăшĕнчипе танлаштарсан, пилĕк хут ӳсрĕ.

Техникăлла çарсем аталаннипе пĕр вăхăтрах çарăн никĕсĕ—пехота та вăйлăланчĕ, вăл çар техникипе хĕçпăшалланса пычĕ. Вăрçă çулĕсенче пирĕн пехота темĕн чухлĕ автомат, танксене хирĕç кĕрешмелли хатĕрсем, зенитнăй хатĕрсем, шултăра калибрлă пулеметсем, минометсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем те нумай илчĕ. Техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек хĕçпăшалланни пехотăн оборона тумалли тата наступлени тумалли майĕсене чылаях вăйлăлатрĕ, пысăках мар чĕрĕ вăйпах боевой задачăсене ăнăçлăн татса пама май туса пачĕ.

Çарăн ытти тĕслĕхĕсем те чылай аталанса техника тĕлĕшĕнчен хĕçпăшалланчĕç.

Депутат юлташсем! Çакăн пек пысăк тата техника тĕлĕшĕнчен хăватлă çар тунн пирĕн государствăран çав тери нумай вăй-хăват илчĕ. Çĕршыв Тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçе ĕçлеме юрăхлă миллионшар çын, туртăм вăйĕпе транспортăн (автомашинăсен, тракторсен тата лашасен) чылай пысăк пайне пачĕ. Çав вăхăтрах тата пирĕн çĕршывăн фронт мĕн ыйтнисене пурне те туса памалла пулчĕ.

Çаксем, паллах ĕнтĕ, пирĕн халăх хуçалăхĕшĕн питĕ пысăк йывăрлăхсем, халăхшăн та йывăрлăхсемпе çитменлĕхсем туса панă.

Паллах ĕнтĕ, пирĕн çĕршывăн хальхи вăхăтри вăрçă ыйтăвĕсене килĕштерме пултаракан çар хуçалăхĕ пулман пулсан тата хальхи вăрçа кирлĕ пур тĕрлĕ резервсем те пулман пулсан, пирĕн вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерме тата хальхи вăхăтри Хĕрлĕ Çар пек хăватлă çар тума май килмен пулĕччĕ.

1931 çулта, Отечественнăй аслă вăрçă пуçланиччен вунă çул маларах, Сталин юлташ социализмлă промышленноçри работниксен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш конференцийĕнче çапла каларĕ:

«Малта пыракан çĕршывсенчен эпир 50—100 çул каярах юлнă. Çак хушша пирĕн вунă çул хушшинче чупса тухмалла. Эпир е çавна тăвăпăр, е пире лапчăтса хурĕç».

Пире лапчăтса хураймарĕç! Эпир Германие—промышленность тĕлĕшпе чи хăватлă çĕршывсенчен пĕрне, пире хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăй парăнтарнă мĕнпур Европăн ресурсĕсемпе усă курнăскерне, çĕнтертĕмĕр. Эпир сталинла пилĕкçуллăхсем пирĕн çĕршыва тĕпренех улăштарнă пирки çĕнтертĕмĕр. Совет Союзĕ хăватлă государство пулса тăчĕ, çакă ĕнтĕ вăрçă вăхăчĕпе тата унăн результачĕсемпе лайăх палăрчĕ. Пирĕн социализмлă экономика чи йывăр условисенче пирĕн çара хĕçпăшал, кăткăс машинăсем, механизмсем, апат-çимĕçпе чĕртавар çителĕклĕ таранах парса тăма пултарчĕ.

Аслă совет халăхĕ, рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, пирĕн интеллигенци Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума кирлĕ техникăна тата ытти тĕрлĕ япаласем парас тесе, хăйсен мухтавлă ĕçĕсемпе мĕн кирлине пурне те туса пачĕç. Хĕрлĕ Çар, унăн боецĕсем, офицерĕсемпе генералĕсем хăйĕн халăхне тивĕçлĕ пулчĕç, халăх шанса панă ĕçе тӳрре кăларчĕç, Тăван çĕршыв хăйсен аллине панă техникăпа тата ресурссемпе туллин те пĕлсе усă курма пултарчĕç.

Депутат юлташсем!

Европăри вăрçă вĕçленчĕ. Совет Союзĕшĕн мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ. Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем умне çĕнĕ задачăсем тухса тăчĕç. Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем, яланхи пекех Совет государствин çар хăвачĕ пулса тăрса, мир упракан тата пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăха упракан фактор пулса тăрса, çĕнĕ обстановкăра хамăр çĕршыва вăрçă кунĕ сурансене сиплеме, хамăр халăхăн пурнăçĕпе культурине хăпартас тĕлĕшпе ирĕклĕн ĕçлеме май памалла. Вăрçă вĕçленнĕ пирки, вăл задачăсене эпир сахалтарах вăйсемпех татса пама пултаратпăр. Халĕ пире вăрçă вăхăчĕ пынă тапхăрта пулнă пек нумай йышлă çар кирлĕ мар. Çĕршыв интересĕсем Хĕрлĕ Çар йышне чакарма, ватăрах çулхи воинсене килĕсене, хăйсен çемьисем патне, мирлĕ ĕç патне таврăрма хушаççĕ, çапла тума эпир пултаратпăр та.

Çакна шута илсе, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Союзĕн Верховный Совечĕн XII-мĕш сессине пăхса тухма ватăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен калакан закон проектне тăратать. Проектра палăртнă тăрăх, малтанлăха вунвиçĕ çул хушшинчи ватăрах çынсене киле ямалла.

Пирвайхи черетре киле ямаллисене 1945 çулăн иккĕмĕш çуррине ямалла. Киле ярас ĕçе план тăрăх тата йĕркеллĕ туса ирттермешкĕн ăна черетпе туса пымалла. Чугун çул транспорчĕ йĕркеллĕ ĕçлетĕр тата çартан киле яракан çынсене ĕçе лайăхрах вырнаçтарма пултăр тесе те çак ĕçе черетпе туса ирттермелле.

Темиçе миллион çынна çартан киле ярас ĕç вăл государствăн питĕ пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Çав ĕç çар командованине питĕ йĕркеллĕ ĕçлеме, çартан киле ярас ĕçĕн планне тĕплĕн туса хума тата килĕсене таврăнакан çар çыннисене материальнăй пулăшу парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме хушать. Çартан киле яни совет тата парти органĕсем умне политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк задачăсем кăларса тăратать. Вăл задачăсенчен чи палли—Хĕрлĕ Çартан киле яракан паттăр совет воинĕсемшĕн тăванла тăрăшни пулса тăрать.

Çартан киле яракан çынсемшĕн тăрăшасси вăл чăн-чăн халăх правительстви пулса тăракан Совет правительствин пĕтĕм политикинчен тухса тăрать.

Совет правительстви тата совет халăхĕ хăйсен воинĕсемпе вĕсен çемйисемшĕн тăрăшни уйрăмăнах Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче лайăх палăрчĕ.

Хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çартан таврăнакан çынсемшĕн тата ытларах тăрăшмалла.

Сталин юлташ пире çапла вĕрентет: тĕнчере пур чи хаклă капиталсенчен хаклăраххи, ĕçе татса паракани—çынсем, кадрсем пулса тăраççĕ, тет.

Сире сӳтсе-явма тата çирĕплетме тăратакан Закон проекчĕ çынсемшĕн сталинла тăрăшнине питĕ уççăн кăтартса парать.

Закон проектĕнче çартан таврăнакан çынсене материальнăй пулăшу парас тĕлĕшпе нумай ĕçсем палăртса хунă.

Законра каланă тăрăх, киле таврăнакансене пурне те обмундировани тата атă-пушмак параççĕ, çавăн пекех тата çул çинче киле çитиччен çиме апат-çимĕç парса яраççĕ.

Вăрçă вăхăтенче çав тери пысăк расходсем тӳсмелле пулнă пулсан та, Правительство киле таврăнакансене пурне те укçа парса пулăшма шутлать. Çапăçури Çартан киле таврăнакансене пурне те Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче çар службинче тăнăшăн кашни çулшăн çакăн чухлĕ укçа пама палăртса хунă:

тĕрлĕ çарсемпе тĕрлĕ службăсенчи рядовойсене, пĕтĕмĕшле çар тарифĕпе укçа илсе тăракансене—службăра тăнă кашни çулшăн çулталăк хушшинче илнĕ шалу чухлĕ;

ятарласа тунă чаçсемпе подразделенисен рядовой составне, нумайтарах укçа илсе тăракансене — службăра тăнă кашни çулшăн çур çул хушшинче илнĕ шалу чухлĕ;

мĕнпур йышши çарсен сержанчĕсене—должноçне кура çулталăк хушшинче панă ĕçукçин çурри чухлĕ. Вăл укçа службăра пулнă кашни çулшăн 900 тенкĕ таран, анчах 300 тенкĕрен кая мар пулмалла;

Офицерсен составне:

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче çарта пĕр çул пулнисене—икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ;

икĕ çул хушши пулнисене—виçĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ;

виçĕ çул хушши пулнисене—тăватă уйăхри ĕçукçи чухлĕ;

тăватă çул хушши пулнисене—пилĕк уйăхри ĕçукçи чухлĕ.

Закон проекчĕ тăрăх, кунсăр пуçне, союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене, ĕççынни депутачĕсен крайсемпе облаççенчи совечĕсен исполкомĕсене предприятисен, учрежденисен тата организацисен хуласенчи руководителĕсене çартан киле таврăннă çынсене пĕр уйăх хушшинчен кая юлмасăр ĕç тупса пама хушнă. Закон проекчĕ кăтартса панă тăрăх, çартан таврăнакансене ĕç панă чухне вĕсем Хĕрлĕ Çарта туяннă опытпа специальноçа шута илмелле, вĕсене Хĕрлĕ Çара кайиччен ĕçленĕ вырăнтан кĕçĕнтерех мар вырăна вырнаçтармалла.

Закон проекчĕ тăрăх, çавăн пекех, çартан таврăнакансене хваттер тата вутă тупса парса пулăшмалла.

Ĕççынни депутачĕсен ял Совечĕсене тата колхоз правленийĕсене закон проекчĕ çартан таврăнакан çынсене ĕçе вырнаçтарма тата хуçалăх туянма пур енчен те пулăшма хушать.

Вăхăтлăха оккупациленĕ районсенче нимĕçсем пирĕн халăх хуçалăхне мĕн тери пысăк сиен кӳни пуриншĕн те паллă. Çавăнпа та Хĕрлĕ Çартан таврăнакан нумай çынсем хăйсен хуçалăхне сиен кӳнине е аркатса тăкнине курĕç. Влаçăн вырăнти органĕсен тата колхозсен, закон проекчĕ тăрăх, çартан таврăнакан çынсен хуçалăхне ура çине тăратма пулăшмалла.

Союзлă тата автономиллĕ республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, ĕççынни депутачĕсен крайсемпе облаççенчи совечĕсен исполкомĕсене çапла тума хушнă: нимĕç оккупацийĕнчен сиен курнă районсенче çартан таврăнакан çынсене, вĕсен кил-çуртне юсамалла е çĕнĕрен тумалла пулсан, çуртйĕр тумалли йывăç касма вăрман тӳлевсĕр уйăрса памалла.

Законăн çав проекчĕ тăрăхах коммунальнăй тата çуртйĕр строительствине укçа-тенкĕ парса тăракан Пĕтĕм Союзри банка (цекомбанка) нимĕç оккупацийĕнчен сиен курнă районсенче пурăнмалли çуртйĕсем тума е юсама 5—10 çул хушши тӳлесе татмалли 5—10 пин тенкĕлĕх кивçен укçа пама хушнă.

Çакăн пек ĕнтĕ, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ сире çирĕплетме тăратакан Законăн проекчĕ.

Çак ĕçсем вĕсем Совет правительстви тата Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар воинĕсемшĕн çав тери тăрăшнине уççăн кăтартса параççĕ. Пирĕн воинсем Отечественнăй

Юлашки 2-мĕш страницăра.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Отечественнăй аслă вăрçăра Германие çĕнтернине яланлăха палăртса хăварас тесе, 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Мускавра, Хĕрлĕ площадьре Çапăçури çар чаçĕсен, Тинĕс-Çар Флочĕн тата Мускав гарнизонĕн парадне,—ÇĔНТЕРӲ ПАРАДНЕ туса ирттерме хушатăп.

Парада фронтсенчен килнĕ пĕрлештернĕ полксене, Оборона Наркомачĕн пĕрлештернĕ полкне, Тинĕс-Çар Флочĕн пĕрлештернĕ полкне, çар академийĕсене, çар училищисене тата Мускав гарнизонĕн çарĕсене илсе тухас.

Çĕнтерӳ парадне манăн заместитель—Совет Союзĕн Маршалĕ ЖУКОВ йышăнать.

Командир пулса парадра ертсе пыраканĕ Совет Союзĕн Маршалĕ РОКОССОВСКИЙ пулать.

Парада организацилес тĕлĕшпе пĕтĕмĕшле ĕçе Мускав Çар округĕнчи çарсен командующийĕ тата Мускав хули гарнизонĕн начальникĕ АРТЕМЬЕВ генерал-полковник ертсе пырать.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ. № 370.

И. В. Сталин Б. Берут господинпа Эд. Осубка-Моравский господина йышăнни

Июнĕн 21-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Польша Халăх Совечĕн Президентне Б. Берут господина тата Польша республикин Вăхăтлăх Правительствин премьер-министрне Эд. Осубка-Моравский господина йышăннă.

Йышăнура премьер-министрăн Заместителĕ В. Гомулка господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ В. Ржимовский господин, С. Швальбе господин тата Польша посолĕ З. Модзелевский господин пулнă.

Калаçăва СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов хутшăннă.

В. М. Молотов Чехословаки Министрĕсен Совечĕн Председателĕпе Зд. Фирлингер господинпа калаçни

Июнĕн 22-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Чехословаки республикин Министрĕсен Совечĕн Председателĕпе Зд. Фирлингер господинпа калаçнă.

Калаçура Совет Союзĕн Чехословаки республикинчи посолĕ В. А. Зорин пулнă.

Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине туса хурас ыйту

Халиччен çапла пĕлтернĕччĕ: союзлă виçĕ державăн Крымри конференцийĕ СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. Молотова, Великобритани Посолне Арчибальд К. Керр сэра, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Посолне В. А. Гарриман господина Польшăн Вăхăтлăх правительствин членĕсемпе тата Польшăпа ют çĕршывсенчи ытти демократиллĕ деятельсемпе Польшăн Вăхăтлăх правительствине урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе канашлу туса ирттерме полномочи панă. Çав канашлура Польшăн Вăхăтлăх правительствине анлăрах демократиллĕ никĕс çинче çĕнетсе, правительствăна Польшăри демократиллĕ деятельсене тата ют çĕршывсенчи поляксене кĕртсе, Польша халăх пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх правительствине туса хурасси çинчен калаçмалла пулнă.

Июнĕн 17-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче Польшăн Вăхăтлăх правительствин Мускава килнĕ членĕсем тата Польшăпа ют çĕршывсенчи ытти демократиллĕ деятельсем Польшăн Вăхăтлăх правительствине çĕнетсе Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине туса хурасси çинчен канашланă. Çав канашлусенче Польшăн Вăхăтлăх правительствин членĕсемпе малта асăннă демократиллĕ деятельсем Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Правительствине малта кăтартса панă никĕс çинче тăвасси çинчен пĕтĕмĕшпех калаçса килĕшнĕ. Çав килĕшӳ текстне Польша ыйтăвĕ пирки тунă комиссие тăратнă. Унта çапла каланă: «Польша республикин Вăхăтлăх правительствин представителĕсем — Президент Болеслав Берут господин, Президент заместителĕ Владислав Ковальский господин, Премьер-Министр Эдуард Осубка-Моравский господин тата Премьер-Министр Заместителĕ Владислав Гомулко господин;

Польшăри демократиллĕ деятельсем — доктор Владислав Керник господин (чирленĕ Винценты Витос господин вырăнне килнĕскер), доктор Генрик Колодзейский господин, профессор тата доктор Адам Кржижановский господин, профессор Станислав Кутшеб господин тата Зигмунт Жулавский господин;

поляксен ют çĕршывсенчи пурăнакан демократиллĕ деятелĕсем—Станислав Миколайчик господин, Антон Колодзей господин (Юлий Жаковский инженер вырăнне килнĕскер) тата Ян Станчик господин,—Крымри конференци йышăннă решени тăрăх тунă комисси чĕннипе Мускава килнĕ. Вăл комиссире çаксем тăраççĕ: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов господин, Великобритани Посолĕ Керр господин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Посолĕ Гарриман господин.

Польша республикин Вăхăтлăх правительствин представителĕсем тата Польшăпа ют çĕршывсенчи деятельсем, халăх тивĕçлĕхĕпе Польша государствин никама пăхăнманлăхĕ Польша ыйтăвне поляксем хăйсемех татса памалла тесе хушнине ĕненсе тăрса, Польша республикин Вăхăтлăх правительствине урăхлатса çĕнетес ыйтупа пĕтĕмĕшпех килĕшсе таталчĕç. Çав килĕшӳ тăрăх, пĕр шухăшлă пулса, çакăн пек йышăнчĕç:

а) Польша Халăх Совечĕн Президиумĕн членĕ пулма Польшăран Винценты Витос господина тата ют çĕршывран Станислав Грабский господина чĕнмелле;

б) Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин составне Польшăран хăйĕнчен Владислав Керник тата Чеслав Выцех господинсене тата ют çĕршывран Станислав Миколайчик, Ян Станчик тата Мечислав Тугутт господинсене чĕнмелле;

с) Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин пĕтĕм составĕ çинчен çывăхри кунсенчех Варшава хулинче пĕлтермелле.

Çакăнпа пĕрлех ку таранччен ют çĕршывсенче пурăнакан поляксен демократиллĕ хăшпĕр деятелĕсене государство ĕçне хутшăнтарма йышăннă. Вĕсен шутĕнче «Стронництво Праци» (Ĕç партийĕ) партин председательне Попель господина тата Колодзейпе Жаковский господинсене.

Çӳлте асăннă решенисем çинчен Президент Берут господин Молотов, Керр тата Гарриман господинсенчен тăракан комиссие пĕлтерме пулчĕ».

В. М. Молотов, В. А. Гарриман господин тата Арчибальд К. Керр сэр, Крымри конференци панă полномочи тăрăх Польша ыйтăвĕ пирки тунă комисси шутланаканскерсем, Польшăн Вăхăтлăх правительстви тата Польшăпа ют çĕршывсенчи ытти демократиллĕ деятельсем Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине туса хурасси çинчен калаçса таталнипе хăйсем кăмăллă пулнине палăртнă.

Шупашкар валли вутă çителĕклĕ хатĕрлер

ВКП(б) хула Комитечĕпе хула Совет исполкомĕ панă задани тăрăх, Наркомфин коллективĕн Шупашкар хули валли 450 кубометр вутă хатĕрлемелле. Июнĕн 22-мĕшĕ тĕлне пирĕн коллектив çав заданийĕ 100 проценчĕпех тултарчĕ. Хулана кирлĕ вутта çителĕклĕ хатĕрлес тесе, пирĕн учрежденисемпе шкулсем, ача яслисемпе сачĕсем, больница, мунча, çăкăр завочĕ тата ытти предприятисем пĕр чăрмавсăр ĕçлеччĕр тесе, пирĕн коллектив республика юбилейĕччен планран ирттерсе татах та 100 кубометр вутă хатĕрлеме пулчĕ. Эпир хуларн мĕнпур наркоматсен, учрежденисен, предприятисен тата организацисен коллективĕсене пирĕнтен пример илме чĕнетпĕр.

Финанс Халăх Комиссарĕ **И. ЗОЛОТНИКОВ.**
Парторганизаци бюровĕн секретарĕ **ЛАНСКОВ.**
Местком председателĕ **ЧУРМЕЕВА.**
ВЛКСМ пуçламĕш организаци секретарĕшĕн **СВИНЦОВА.**

Виççĕмĕш пилĕкçуллăх заемĕн тиражĕ

Июнĕн 20-мĕшĕнче Мускавра Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Заемĕн (виççĕмĕш çулхи кăларăмĕн) 18-мĕш тиражĕ пулса иртнĕ.

Тиража мĕнпурĕ 846.400 выляв, 134.743.200 тенкĕлĕх тухнă. Вăл шутра 92 выляв 3.000 тенкĕлĕххисем, 460 выляв 1000 тенкĕлĕххисем, 4.600 выляв 500 тенкĕлĕххисем, 110.400 выляв 200 тенкĕлĕххисем, 730.848 выляв 150 тенкĕлĕххисем. (ТАСС).

А. И. Антонов юлташ доклачӗн вӗҫӗ

(Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра).

аслӑ вӑрҫӑра ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫларӗҫ, халӗ ӗнтӗ тӗрлӗ ӗҫе таврӑнаҫҫӗ.

Закон проекчӗнче кӑтартнӑ ӗҫсем кирлӗ пулни паллах, мӗншӗн тесен ытту кунта пирӗн паттӑр воинсем ҫинчен пырать. Вӗсем тӑватӑ ҫул хушши хаяр тӑшмана хирӗҫ йывӑр та юнлӑ кӗрешӳре пулчӗҫ. Ҫав кӗрешӳре вӗсем хӑйсен вӑйӗсене те, хӑйсен пурнӑҫне те шеллемерӗҫ, ҫав тери пысӑк йывӑрлӑхсемпе инкек-синкек тӳссе ирттерчӗҫ, ҫав тери паттӑррӑн ҫапӑҫса, тӑшмана тӗппипех ҫӗнтерчӗҫ. Тӑван ҫӗршыва чун-чӗререн парӑннипе, присягӑна пӑхӑнса тӑнипе, ҫав тери паттӑр пулнипе, ҫар мастерлӑхӗпе, хӑйсен юнне тӑкнипе Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем пирӗн халӑха чуралантарассинчен тата пӗтерсе тӑкассинчен упраса хӑварчӗҫ.

Ҫапӑҫури Ҫарӑн ватӑрах ҫыннисене киле ярасси ҫинчен калакан Законӑн проектне сессен ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн, пирӗн государство мирлӗ лару-тӑрӑва куҫас тӗлӗшпе пысӑк утӑм тӑвать. Хӗрлӗ Ҫар йышӗ чакать. Анчах Хӗрлӗ Ҫар ҫапах та, малтанхи пекех, пирӗн социализмлӑ Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗн шанчӑкӗ, ирӗклӗхе юратакан халӑхсен мирлӗ пурнӑҫӗпе хӑрушсӑрлӑхне хӳтӗлекен пысӑк вӑй пулса юлать.

Пирӗн умра халӗ ҫакӑн пек задача тӑрать: Совет Союзӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем малашне те пирӗн аслӑ ҫӗршыва тивӗҫлӗ пек вӑйлӑ пулмалла, малашне те, мирлӗ тапхӑр вӑхӑтӗнче те, пирӗн государствӑн ҫарпа экономика хӑвачӗ ҫирӗпленсе пымалла. Вӑл ӗнтӗ пирӗн никам ҫӗнтерми оборонӑн никӗсӗ пулса тӑрать.

Ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн Хӗрлӗ Ҫар лӑпланса ларма пултараймасть. Хӗрлӗ Ҫарӑн генералӗсемпе офицерӗсем Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн ҫӗнтерӳллӗ паттӑр опытне тӗплӗн вӗренмелле, вӑл опыта шута илсе, совет ҫар наукине малалла аталантарса пымалла. Пирӗн Хӗрлӗ Ҫарти ҫарпа политикӑллӑ воспитани ӗҫне Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ панӑ опыта шута илсе туса пырас пулать.

Пирӗн Хӗрлӗ Ҫартан киле таврӑнакан паттӑр юлташсен Тӑван ҫӗршыва аслӑ ӗҫре мӗн май килнӗ таран пулӑшса пымалла. Ҫав ӗҫре вӗсем хӑйсене шанса тӑнипе тивӗҫлӗ пулӗҫ тесе ӗненсе тӑратпӑр.

Депутат юлташсем!

Совет Союзӗ историллӗ аслӑ ҫӗнтерӳ туса Германие парӑнтарни—ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Советне Сире пӑхса тухма Ҫапӑҫури Ҫартан ҫыннисене пӗррелӗмӗш черетпе киле ярасси ҫинчен калакан Законӑн проектне тӑратма май пачӗ.

Совет Союзӗнчи халӑхсем, ҫав историллӗ ҫӗнтерӗвӗн пысӑкӗшне асра тытса, пирӗн ҫӗнтерӳсене хавхалантарса, организацилесе пыракан ҫын ҫинчен, генийллӗ ҫулпуҫпа полководец Сталин юлташ ҫинчен шухӑшлаҫҫӗ. **(Пурте ура ҫине тӑраҫҫӗ. Нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ, «урра» кӑшкӑрнӑ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ).**

Вӑрҫӑ пуҫланиччен нумай малтан Сталин юлташ. пулас ҫапӑҫусен хӑрушлӑхне курса тӑрса, совет халӑхӗн вӑйӗсене Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлеме тата Октябрьте ҫӗнтерсе илнӗ аслӑ ҫитӗнӳсене ют ҫӗршыв захватчикӗсем туртса илесрен хӳтӗлеме хатӗрленӗ.

Вӑрҫӑн чи йывӑр кунӗсенче Сталин юлташ ҫар руководствин пӗтӗм йывӑрлӑхӗсене хӑй ҫине илчӗ. Пирӗн кӗрешӗвӗн пур участокӗсенче те: стратегире, оперативнӑй искусствӑпа тактикӑра, хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене организацилессипе йӗркелессинче, резервсемпе командир кадрӗсене хатӗрлессинче, ҫара ҫар техникипе хӗҫпӑшаллантарассинче, тыла организацилессинче, ҫавӑн пекех тата ҫӗршыва ертсе пырассин пур ытти ӗҫӗсенче те—пур ҫӗрте те яланах эпир Сталин юлташӑн ҫирӗп ертсе пыракан аллине курса тӑтӑмӑр. **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Сталин юлташ хамӑр государствӑри улӑпла пысӑк вӑйсене тӑшмана хирӗҫ кӗрешме ҫӗклерӗ, пирӗн Тӑван ҫӗршыва, совет халӑхне историллӗ аслӑ ҫӗнтерӳ патне илсе ҫитерӗ. **(Алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Ҫак ҫӗнтерӳ совет халӑхне ҫӗнӗ вӑй парать, пирӗн ҫӗршыв вӑрҫӑ кӳнӗ сиене хӑвӑрт юсама пултарнине, экономикӑпа культура енӗпе малалла ӳссе ҫитӗнсе пырассине шантарать. Пирӗн ҫӗршыв малашне те яланхи пекех халӑхсен ирӗклӗхӗпе мирлӗ пурнӑҫӑн шанчӑкӗ пулса юлӗ.

Депутат юлташсем! СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ватӑрах ҫыннисене Ҫапӑҫури Ҫартан киле ярасси ҫинчен калакан Законӑн проектне Сире пӑхса тухса ҫирӗплетме тӑратать. **(Алӑ ҫупаҫҫӗ).**

ТЫРПУЛ ПУХСА КӖРТМЕ ХАТӖРЛЕНЕҪҪӖ

Ҫӗрпӳ районӗнчи «Красные Тиуши» колхоз тырпул пухса кӗртме лайӑх хатӗрленет. Колхоз тырӑ вырмалли пӗр жнейкӑна юсанӑ, ҫурласене шӑлласҫӗ, бригадӑсенче урапасем юсаҫҫӗ. Тырӑ турттарма михӗсем, шӑналӑксем те ҫителӗклӗ. Утӑ ҫулма тухас вӑхӑт нумай юлманнине шута илсе, колхоз ҫавасем туптаса пӗтерчӗ тата лапаткасем те ҫителӗклӗ хатӗрленӗ.

Колхозра халӗ иртнӗ ҫулта вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ клевера ҫумкура[illegible]таҫҫӗ, 15 гектар сурхи тулӑ ҫумланӑ.

А. ИВАНОВ.

Докладчиксемпе агитаторсем валли

ЧӐВАШ ХАЛӐХӖН ИСТОРИЛЛӖ КУНҪУЛӖ

П. Г. ГРИГОРЬЕВ

Чӑвашсене историллӗ документсенче малтанхи хут 1523 ҫулта Сӑр шывӗ Атӑла юхса кӗнӗ вырӑнта Васильсурск хулине крепоҫне тунӑ чухне асӑннӑ.

Истори наукин кӑтартса панӑ тӑрӑх, чӑваш халӑхне уйччен урӑх халӑхсен ячӗсемпе чӗннӗ. Ҫапла VIII—IX-мӗш ӗмӗрсенче чӑвашсем хазарсемпе пӑртассен (буртасы) шутне, унтан IX—XII-мӗш ӗмӗрсенче вара вӗсем Атӑлпа Кама хушшинче пурӑннӑ пулхӑрсен шутне кӗнӗ, кайрантарах вӗсене, тутарсемпе ҫармӑссенчен (марисенчен) уйӑраймасӑр ҫав халӑхсен ячӗсемпе чӗннӗ. «Две бо черемиссы бе в Казанской области, а языки их три»,—тесе палӑртнӑ Хусан летописӗнче (XXX-мӗш сыпӑк).

XIII-мӗш ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗнче монголсемпе тутарсем Хӗвелтухӑҫ Европӑна ҫӗнтерсе илнӗ. Бату-хан ҫарӗсем, хӑйсен ҫулӗ ҫинчи хуласемпе ялсене вутпа ҫунтарса, хӗҫпе аркатса, вырӑс ҫӗрӗсем ҫине ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Сахал йышлӑ чӑваш халӑхне монголсен ҫарӗсем уйччен маларах пусмӑрлӑха кӗртсе ӳкернӗ пулнӑ.

Нумай вӑхӑт хушши пынӑ чуралӑхран хӑтӑлас тесе, чӑваш халӑхӗ хӑйне кӳршӗллӗ пурӑнакан хӑватлӑ вырӑс халӑхӗ ҫумӗнче хӳтлӗх шыранӑ. Кайрантарах чӑвашсем, вырӑс халӑхӗ ертсе пынипе, пусмӑрҫӑсене хирӗҫ пӗр хутчен мар кӗрешӗве ҫӗкленнӗ.

XV-мӗш ӗмӗрте Мускав патшисем — малтан III-мӗш Иван, унтан III-мӗш Василий туса ирттернӗ вырӑс ҫарӗсен вӑрҫӑллӑ похочӗсем вырӑс государствин Сӑр шывӗ ҫинчи, унтан Атӑл тӑрӑхӗнчи, чӑвашсен авалхи ҫӗрӗсем ҫинчи позицийӗсене чылаях ҫирӗплетеҫҫӗ. Паянхи куна ҫитнӗ халӑх юмахӗсемпе халлапӗсенче чӑваш ҫыннисем—Сарый, Анчик тата ыттисем те вырӑс патшисем патӗнче хӑйсем пулни ҫинчен, вӗсем вырӑс ҫарӗсене ҫул кӑтартса пыма, тутарсен Атӑл ҫинче мӗнле тӗрексем (укрепленисем) пуррине кӑтартса пама хатӗр пулни ҫинчен каланӑ. Ҫапла чӑваш ҫӗрӗсем вырӑс государстви ҫумне пӗрлешесси пулса пынӑ.

XVI-мӗш ӗмӗрте, урӑхла каласан, 1552 ҫулта вырӑс государстви Хусан ханстввине ҫӗнтерсе илнӗ. Чӑваш халӑхӗ ҫавӑнтанпа яланлӑхах вырӑс государствипе хутшӑннӑ, ҫапла вара вӑл монголсемпе тутарсен пусмӑрӗнчен ҫӑлӑнса тухнӑ.

Летопись кӑтартса панӑ тӑрӑх, чӑваш халӑхӗ вырӑс ҫарне мӗн кирлине пурне те—тырпул, ашкакай, пыл тата ытти те парса тӑнӑ. Ҫапла пирӗн халӑх хӑй вырӑс государстви ҫине мӗнле пӑхнине палӑртнӑ. Чӑвашсем IV-мӗш Иванӑн ҫарӗсем валли кӗперсем тунӑ, ҫулсем тӳрлетнӗ. Вырӑс ҫарӗсене Атӑл тӑрӑхӗнчи сӗм вӑрмансенче ҫул кӑтартса пыракансем те, ҫавӑн пекех вырӑссемпе пӗрле Хусан ханӗсене хирӗҫ ҫапӑҫӑва хутшӑнакансем те чӑвашсенчен сахал мар пулнӑ.

Вырӑс государствине хутшӑнса, чӑваш халӑхӗ хӑйӗн малашнехи пурнӑҫӗпе кунҫулне яланлӑхах аслӑ вырӑс халӑхӗпе сыхӑнтарнӑ. Пӗтӗм истори ҫакна кӑтартса пачӗ: пирӗн ҫӗршыври нумай халӑхсен мирлӗ пурнӑҫӗпе ӗҫне, вӑл шутра чӑваш халӑхӗнне те, ют ҫӗршыв захватчикӗсенчен хӳтӗлесе пурӑнакан пӗртен-пӗр вӑй вӑл—вырӑс государствипе аслӑ вырӑс халӑхӗ пулса тӑрать.

Атӑл тӑрӑхне вырӑс государствипе пӗрлештернӗ хыҫҫӑн кунти пурнӑҫ хӑвӑртланрах чӗрӗлсе ҫӗкленет. Кунта чылай хуласем ҫуралаҫҫӗ: 1551 ҫулта — Сӗве (Свияжск), 1555 ҫулта—Шупашкар, 1583 ҫулта—Чикме (Козмодемьянск) 1584 ҫулта—Ҫӗрпӳ (Цивильск) хулисемпе ытти хуласен никӗсӗсене хываҫҫӗ.

Патша влаҫӗ «вак халӑхсем» пурӑнакан ҫӗрсене хӑйӗн колонийӗсем вырӑнне хурса тискеррӗн пусмӑрланине пӑхмасӑрах, Российӑн тулашри тата шалти тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте вырӑс халӑхӗпе чӑваш халӑхӗ хушшинчи сыхӑнусем, вӗсем пӗр-пӗрне ӑнланасси, юратса пурӑнасси майӗпен вӑйланса пырать.

1605—1612-мӗш ҫулсенче вырӑс государствине ютҫӗршыв интервенчӗсем тапӑннӑ. Вырӑс халӑхӗшӗн уйчухне питӗ йывӑр вӑхӑт пулнӑ. Пожарски тата Минин ертсе пынипе, вырӑс халӑхӗ интервентсене хирӗҫ паттӑр кӗрешӗве ҫӗкленнӗ. Историллӗ документсем кӑтартса панӑ тӑрӑх, ҫав вӑхӑтра Козьма Минин организациленӗ Чулхула (Нижегородск) ополченине чӑвашсем те хутшӑнаҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗ ополчени валли лашасем, апат-ҫимӗҫ, тырпул, тир-сӑран пухса парать.

XVIII-мӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче I-мӗш Петр регулярнӑй ҫар организацилет. Ҫара, ытти халӑхсемпе пӗрлех, чӑвашсене те илеҫҫӗ. Чӑвашсем, вырӑс ҫарӗсен ретӗнче тӑрса, 1695—1696-мӗш ҫулсенче Азов тинӗсӗ хӗррипчи походсене каяҫҫӗ, кайран 1709 ҫулта Полтава патӗнчи ҫапӑҫура та пулаҫҫӗ. Уйчухнехи историллӗ документсенче Козмодемьянск уездӗнчи Юнкӑпуҫ ялӗнчи Янтуш раттинчен тухнӑ Тевел ятлӑ ҫыннӑн ячӗ палӑрса юлнӑ. Чӑваш халӑхӗ XVIII-мӗш ӗмӗрте Петербург хулине, Кронштадт крепоҫне тунӑ ҫӗре, Каспи тинӗсӗ ҫинчи Иран чикки патӗнче Гильяны крепоҫне хывнӑ ҫӗре, Ладога кӳлли патӗнчи тата Атӑлпа Дон хушшинчи каналсене алтнӑ ҫӗре хутшӑнса ӗҫленӗ. Уйчухне тин ҫеҫ ҫуралакан вырӑс флочӗ валли карапсем тума чӑваш ӗҫҫыннисем авалхи юмансене касса турттарнӑ. Ҫавӑнта ӗҫлекенсене лашмансем тесе чӗннӗ.

Ҫав ӗҫсем пурте вырӑс государствине экономикӑпа политика тӗлӗшӗнчен тӗреклетме пулӑшнӑ.

Ҫавӑн пекех вырӑс халӑхӗ ертсе пынипе, чӑвашсем ытти халӑхсемпе пӗрлех, 1756—1762 ҫулсенчи вӑрҫӑра Прусси королӗн II-мӗш Фридрихӑн ҫарӗсене ҫапса аркатнӑ ҫӗре, XVIII-мӗш ӗмӗрӗн вӗҫӗнче Хура тинӗс ҫыранӗсемшӗн пынӑ ҫапӑҫусене, чаплӑ Суворовӑн похочӗсене хутшӑннӑ.

Анчах патша влаҫӗ, вырӑс халӑхне хӑйне те пусмӑрласа тӑнӑскер, чӑваш халӑхӗ пек «вак халӑхсене» чура вырӑнне кӑна шутланӑ.

Ҫавӑнпа та ирӗклӗхшӗн, хӑйӗн пурнӑҫ прависемшӗн вырӑс халӑхӗ ертсе пынипе, пирӗн чӑваш халӑхӗ те пусмӑрҫӑсене хирӗҫ, халӑхӑн шалти тӑшманӗсене хирӗҫ пӗр хутчен мар кӗрешӗве тухнӑ.

1671—1672-мӗш ҫулсенче Степан Разин пуҫарнӑ хресчен вӑрҫи пӗтӗм Чӑваш ҫӗршывӗнче талкишӗпех сарӑлнӑ. Разин пӑлхавне чӑваш ӗҫҫыннийӗсенчен 10 пине яхӑн ҫын хутшӑннӑ.

Тепӗр ҫӗр ҫултан (1773—1775 ҫулсенче) чӑваш халӑхӗ, вырӑс, пушкӑрт тата Атӑл тӑрӑхӗнчи ытти халӑхсемпе пӗрле, Емельян Пугачев ертсе пыракан пӑлхава ҫӗкленнӗ.

Ҫапла вырӑс халӑхӗпе чӑваш халӑхӗн туслӑхӗ, ҫавӑн пекех ытти халӑхсен туслӑхӗ те, историллӗ кӗрешӳре—тулашрипе шалти тӑшмансене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре ӳссе ҫирӗпленнӗ.

Ҫав туслӑх кайрантарахри вӑрҫӑсенче те, уйрӑмӑн илсен, Наполеон ҫарӗсене хирӗҫ пынӑ 1812 ҫулхи Отечественнӑй вӑрҫӑра, уҫӑмлӑн палӑрнӑ. Наполеон вырӑс ҫӗрне тытса илсе ӑна хӑйӗн колонийӗ туса хума, ҫак ҫӗр ҫинчи пӗтӗм халӑха чуралӑха кӗртсе ӳкерме хапсӑннине вырӑс халӑхӗ лайӑх курнӑ. Ҫавӑнпа та вӑл, пӗр ҫын пек пулса, Наполеон ҫарне хирӗҫ тӑнӑ. Вырӑс халӑхӗ ҫав вӑрҫӑра хӑй тавра пирӗн ҫӗршыври ытти халӑхсене те пӗтӗҫтернӗ. Ҫав халӑхсен ретӗнче пирӗн чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем те пулнине Россия историйӗн страницисенче палӑртса хӑварнӑ. Париж хулине илекен вырӑс ҫарӗсен ретӗнче пулнӑ чӑваш салтакӗсене чылайӑшӗсене ун чухне наградӑсем те панӑ. Чӑваш халӑхӗ ҫар валли укҫа, апат-ҫимӗҫ, лаша апачӗ, пир-авӑр пухнӑ. Ҫапла аслӑ вырӑс халӑхӗ ун чухне те хӑйӗн ҫӗршывне захватчиксенчен хӳтӗлесе хӑварнӑ, ҫакӑнпа пӗрле вӑл пирӗн ҫӗршыври мӗнпур халӑхсене ют ҫӗршыв пусмӑрҫисенчен ҫӑлса хӑварнӑ.

XIX-мӗш ӗмӗрӗн 40-мӗш ҫулӗсенче, государство аллинчи хресченсем тӗлӗшпе «Киселев реформисене» туса ирттернӗ хыҫҫӑн, пӗтӗм Российипе тенӗ пекех, ҫакӑнпа пӗрлех тата чӑвашсем хушшинче те, хресченсен пысӑк пӑлхавӗсем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав пӑлхав Хусан губернийӗнчи Етӗрне, Чикме уесчӗсенче уйрӑмах вӑйлӑн сарӑлать; пӑлхава 40.000 ҫын ытла хутшӑнать. Вӗсене ертсе пыракансем хушшинче 1812 ҫулхи вӑрҫӑра пулнӑ ҫынсем уйрӑмах палӑрса тӑнӑ.

Халӑх пурнӑҫӗ питӗ йывӑр пулнӑ. Чӑваш ӗҫҫыннийӗсем тӗттӗмлӗхре, мунча пек хура пӳртсенче асапланнӑ. 1839 ҫулта Етӗрне уездӗнчи Чӑваш ялӗсенче 14.964 хура пӳрт, Ҫӗрпӳ уездӗнче 16.000 хура пӳрт пулнӑ. Шурӑ пӳртсем пулманпа пӗрех. Ҫав хура пӳртсенче лампа вырӑнне хӑйӑ ҫуннӑ. Чӑваш ҫынни культура ҫинчен ӗмӗтленме те пултараймӗн.

XIX-мӗш ӗмӗрӗн сурринче тин чӑваш ялӗсенче унта-кунта малтан удел шкулӗсем, унтан вара казна шкулӗсем уҫӑлаҫҫӗ. Влаҫсем пысӑк чӑрмав кӳнӗ пулин те, чӑваш ялӗсенче шкулсем уҫас тӗлӗшпе В. И. Ленин ашшӗ—Илья Николаевич Ульянов пысӑк ӗҫ туса ирттерет. 1874 ҫулта Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче, унӑн инспекторӗ И. Я. Яковлев тӑрӑшнипе, вырӑс алфавичӗн никӗсӗ ҫинче чӑваш алфавитне тӑваҫҫӗ. Майӗпен чӑваш кӗнекисем тухма тытӑнаҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗ хушшинче хӑйсем тӗллӗн вӗренсе хут лайӑх пӗлекен ҫынсем ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ.

Вӗсенчен уйрӑмах Тутаркас вулӑҫӗнчи Юнкӑпуҫ ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Спиридон Михайлович Михайлова палӑртма пулать. Вӑл хӑй тӗллӗн вӗренсех ученайпа писатель виҫине ӳссе ҫитнӗ. 1852—1860 ҫулсем хушшине С. Михайлов истори, этнографи, чӗлхе тата статистика ыйтӑвӗсемпе 34 печатнӑй листана ҫити тӗрлӗрен ӑслӑлӑх ӗҫӗсем пичетлесе кӑларнӑ. Чӑвашсем ҫинчен вырӑс тӗпчевҫисем ҫырнӑ тӗрлӗ кӗнекесем тухаҫҫӗ. XIX-мӗш ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче чӑваш чӗлхине тӗпчесе вӗренес тӗлӗшпе Н. И. Ашмарин профессор ӗҫлеме тытӑнать.

Ҫапла аслӑ вырӑс халӑхӗн ҫуллӗ пусӑмра тӑракан культуринчен вӑй илсе, чӑваш халӑхӗн малтанхи культура хӗлхемӗсем палӑраҫҫӗ. Ҫав ҫулсенче чӑвашсен илемлӗ литератури ҫуралать. Унӑн никӗсне хываканӗ—Константин Иванов, гениллӗ «Нарспи» поэмӑн авторӗ.

1905—1907-мӗш ҫулсенчи революци хумӗсем пӗтӗм ҫӗршыва ҫӗнӗ сывлӑш кӳреҫҫӗ. Малта тӑракан вырӑс пролетариачӗ ертсе пынипе, чӑваш рабочийӗсемпе ӗҫхресченӗсем те революцие активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Улатӑрта, Шупашкарта, Етӗрнере, Коптаркӑра (Атӑл ҫинче) рабочисем хушшинче хумханусемпе забастовкӑсем пулса иртеҫҫӗ. Чӑваш хушшинчи рабочисене промышленноҫлӑ пысӑк центрсенчи — Чулхулари (хальхи Горький хули), Хусанти тата Российӑн ытти хулисенчи большевикла организацисем хавхалантарса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Ивановӑри, Апашри, Чемейри, Кольцовкӑри тата ытти ҫӗрти хресченсен выступленийӗсем те большевиксен революциллӗ юхӑмӗпе сыхӑнса тӑнӑ. Ҫакна ӑна Мускавпа Чулхула большевикӗсем кӑларнӑ листовкӑсемпе прокламацисем чӑваш ялӗсенче йышлӑн сарӑлни те ҫирӗплетсе парать.

Ҫапла пирӗн ҫӗршыври аслӑ вырӑс халӑхӗпе ытти халӑхсем хушшинчи туслӑх ӗмӗрхи кӗрешӳре — халӑх ирӗклӗхӗпе телейӗшӗн пынӑ кӗрешӳре ӳссе тӗрекленет.

1917 ҫулхи Октябрьте Ленинпа Сталинӑн аслӑ партийӗ ертсе пынипе, Российӑри рабочисемпе хресченсем эксплоататорсен—помещиксемпе капиталистсен влаҫне сирпӗтсе антарчӗҫ, ӗҫҫыннисем ӗмӗрхи пусмӑрлӑхран тухрӗҫ.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн вырӑс рабочийӗсемпе хресченӗсем, ҫӗршыври ытти мӗнпур тӑванла халӑхсемпе пӗрле, тӗнчере малтанхи хут рабочисемпе хресченсен Совет государствипе туса хучӗҫ. Историре малтанхи хут ӗҫҫыннисем хамӑр Тӑван ҫӗршыври мӗнпур пуянлӑхсен тата хӑйсен пурнӑҫӗн чӑн-чӑн хуҫисем пулса тӑчӗҫ. Халӑхсен пӗртанлӑхӗпе туслӑхӗ ҫӗнтерсе чапа тухрӗ.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революцире пирӗн ҫӗршыври халӑхсен ҫӗнӗ историйӗ пуҫланать. Ҫавӑн пекех эпир чӑваш халӑхӗн ҫӗнӗ, мухтавлӑ кунҫулне те Октябрьтен хисеплесе пыратпӑр.

Октябрьти революци, помещиксемпе ҫӗр улпучӗсенчен 106.000 гектар ҫӗр тытса илсе, чӑваш халӑхне пачӗ. Казнапа удел вӑрманӗсем, улӑх-ҫарансемпе шыв-шурсем халӑх аллине куҫрӗҫ.

Октябрьти революци чӑваш халӑхне ытти тӑванла халӑхсемпе пӗрлех, политикӑллӑ правӑсем пачӗ, граждан вӑрҫи пӗтнӗ хыҫҫӑн халӑхсем хӑйсен автономийӗсене туянчӗҫ.

Большевиксен партийӗ ертсе пынипе аслӑ вырӑс халӑхӗ тӑванла пулӑшнипе пирӗн чӑваш халӑхӗ те хӑйӗн хуҫалӑхӗн культурине вӑйлӑн ӳстерсе чечеклентме май илчӗ. Ӳсӗм ҫулӗ ҫинче тунӑ пысӑк ҫитӗнӳсене чӑваш халӑхӗ халӗ хӑй республикин чаплӑ уявӗнче пӑхса тухать.

ПУЛТАРУЛЛӐ КОМПОЗИТОР

Г. Я. Хирбю концерчӗ

Ҫак кунсенче Григорий Яковлевич Хирбю композиторӑн произведенийӗсенчен йӗркеленӗ радиоконцерт пулса иртрӗ. Концерт пынӑ майӗпе эпир Хирбю юлташӑн 15 ҫул хушшинчи ӗҫӗсемпе паллашрӑмӑр.

Г. Я. Хирбю музыка ӗҫне аслӑ шкулта вӗренсе тухнӑ композитор. Вӑл 15 ҫул ӗлӗкрех, хӑй Шупашкарта музыка техникумӗнче вӗреннӗ чухнех юрӑсем ҫырма тытӑннӑ. Вӑл Ф. П. Павловӑн юратнӑ вӗренекенӗ пулнӑ, музыка кружокӗнче тӑнӑ. Ф. П. Павлов кӑтартнипе юрӑсем ҫырнӑ. Техникумра вӗреннӗ чухне унӑн юррисем «Сунтал», «Капкӑн» журналсенче, «25 массӑллӑ юрӑ» ятлӑ сборникре тата уйрӑм листовкӑсенче пичетленнӗ. Вӑл шутран «Физкультурниксен маршӗ», «Савни юрри», «Ӑмӑртуллӑ ҫар», «Ҫӑмӑр хыҫҫӑн», «Ытарма ҫук» тата ыттисене те палӑртмалла.

Музыка техникумӗ хыҫҫӑн Хирбю Ленинградри консерваторипе, композиторсен факультетне вӗренме кӗнӗ. Вӑл ҫак факультетра ӑнӑҫлӑн вӗренсе тухать. Тӑван республикӑна килсе творчество ӗҫне хастарлӑн тытӑнать.

Унӑн пултарулӑхӗ анлӑн аталанса пырать: вӑл тӗрлӗ жанрпа, тӗрлӗ формӑпа ҫырать. Вӑл ҫырнисем хушшинче пӗччен юрламалли юрӑсем, иккӗн юрламаллисем, хорпа юрламаллисем, музыка инструменчӗпе каламаллисем, оркестр валли ҫырнӑ произведенисем, увертюрӑсем, симфонисем пур. Халӗ вӑл опера ҫырать.

Композитор Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлерӗ. «Прощальное» тата «Встреча» юрӑсемпе вӑл премисем илнӗ. «Пурнӑҫ юрри» ятлӑ юрӑсен сборникне хатӗрлесе пичете пачӗ. Чӑваш академиллӗ театрӗ валли «Нарспи» драмӑна лартнӑ чухне юрламалли тата музыка инструменчӗпе каламалли юрӑ-кӗвӗсене йӗркелесе пачӗ: музыка инструменчӗсем валли квартет тата хорпа оркестр валли пысӑк произведени—кантата ҫырнӑ.

Хирбю творчествипе паллаштаракан концертра унӑн хорпа юрламалли юррисенчен «Мухтав аслӑ Ленина, мухтав аслӑ Сталина» ятлӑ юрӑ (сӑвви П. Хузангайӑн). чӑваш халӑхӗн паттӑр ывӑлне—Ф. Н. Орлова хисеплесе ҫырнӑ «Хаҫӑр ӑмӑрткайӑк» юрра, «Сурхи кунсем» юрра тата ытти чылай юрӑсене итлерӗмӗр.

Хирбю чӑваш халӑх юррисене йӗркелессипе те нумай ӗҫленӗ. Асӑннӑ юрӑсемсӗр пуҫне, вӑл «Ҫӑлтӑр витӗр», «Вӗҫ, вӗҫ куккук», «Тӑри вӗҫрӗ», «Куртӑр-а?», «Анатран хӑпарать» юрӑсемпе ыттисене пӗччен юрлама йӗркелесе ҫырнӑ.

Халӑх юррисене композитор хӑйӗн пысӑк произведенийӗсене кӗртет. Сӑмахран, халӗ хӑй пӗррмӗш актне ҫырса пӗтернӗ «Сентиерпа Пинерпи» оперӑпа вӑйӑ юрри кӗртнӗ (оперӑна П. Н. Осиповӑн «Айдар» драми тӑрӑх ҫырнӑ). Концертра оперӑри «Атьӑр, хӗрсем, вылямa» ятлӑ кӑнӑ юррисӗр пуҫне, Пинерпи юррине З. П. Селиванова солистка юрласа пачӗ.

Музыка инструменчӗсемпе, оркестрпа каламалли произведенисенчен концертра Чӑваш АССР 25 ҫул тултарнӑ тӗле ятарласа ҫырнӑ маршпа паллашрӑмӑр.

Пӗтӗмӗшпе илсен, радиоконцерт аван иртрӗ. Пуринчен ытла «Сӑпка юрри», марш тата оперӑри хор кӑмӑла кайрӗҫ. Ҫавӑн пекех авторӑн малтанхи тапхӑрта ҫырнӑ юррисенчен пӗрне те пулин юрласа пани кирлӗччӗ.

Асӑннӑ концертра Радиокомитетӑн Хирбю композитор ертсе пыракан юрӑ ансамблӗ хӑйӗн ӑсталӑхне чылай ӳстернине кӑтартрӗ. Юлашки вӑхӑтра вӑл уйрӑм темӑсем тӑрӑх концертсем пама тытӑннине палӑртмалла.

Н. ВАСАНКА.

Хытӑ чупакан лашасен ӑмӑртӑвӗсем

Чӑваш республики 25 ҫул тултарнипе уявланӑ кунсенче Шупашкар хулинчи ипподромра хытӑ чупакан лашасен ӑмӑртӑвӗ пулса иртет. Ҫак ӑмӑрту вӑл Чӑваш республикинчи колхозсем 25 ҫул хушшинче ӑратлӑ лашасем ӗрчетес енӗпе мӗнле ӗҫленине хӑшпӗр енчен кӑтартса парать.

Лашасем мӗнле чупнине сӑнасси Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче чӑн малтан иртнӗ ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче пулса иртнӗччӗ. Ҫак ӑмӑртӑва республикӑри 18 колхоз тата лаша завочӗ хӑйсен лашисене илсе килнӗччӗ.

Кӑҫал хытӑ чупакан лашасен ӑмӑртӑвӗ районсенче пуҫланчӗ те ӗнтӗ. Июнӗн 17-мӗшӗнче Етӗрне районӗнче Сӑр шывӗ лешъенчи лаша заводӗнче пулса иртрӗ. Ҫак ӑмӑртӑва пурӗ 27 лаша хутшӑнчӗ. Вӗсен шутӗнче лаша завочӗн 17 лаши, колхозсен 9 лаши тата Етӗрнери спирт завочӗн 1 лаши пулнӑ. Етӗрнесем хытӑ чупакан лашасен ӑмӑртӑвне лайӑх хатӗрленсе ирттерчӗҫ. Ипподрома таврари колхозсенчен, Етӗрне хулинчен халӑх йышлӑн пухӑннӑ.

Чӑн малтанах Сӑр шывӗ лешъенчи заводӑн 1943 ҫулта ҫуралнӑ «Легенда», «Чайпа» ятлӑ кӗррисем тата «Кедр» ятлӑ ӑйӑрӗ ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Финиш юпи патне «Чайпа» кӗсре чи малтан чупса ҫитет, ӑна лаша завочӗн лашисене пӑхаканӗ Устинов юлташ ларса тытса пырать. Ҫак кӗсре 1600 метра 3 минут та 03 секундӑра чупса тухать.

Иккӗмӗш ӑмӑртӑва 4 лаша хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсен шутӗнче Сӑр шывӗ лешъенчи заводӑн «Задорная», «Частушка», «Чистота» ятлӑ лашисем тата Етӗрне районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхозӑн «Сигнал» ятлӑ лаши пур. Устинов юлташ ларса тытса пынӑ «Чистота» ятлӑ лаша мала тухать. Вӑл 1600 метра 2 минут та 35 секундӑра чупса тухать.

Виҫҫӗмӗш ӑмӑртӑва Сӑр шывӗ лешъенчи заводӑн «Малина» тата «Засурская» ятлӑ кӗррисем хутшӑнаҫҫӗ. «Малина» ятлӑ лаша 1600 метра 2 минут та 23 секундӑра чупса тухса пӗррмӗш вырӑн йышӑнать.

Саккӑрмӗш ӑмӑртӑва Сӑр шывӗ лешъенчи заводӑн хура тӗксӗм ӑйӑрӗ «Чижик» тата Етӗрне районӗнчи «Борец» колхозӑн «Аван» ятлӑ ӑйӑрӗ хутшӑнаҫҫӗ. «Чижик» тип-тикӗс, пӗр пӑрқаланмасӑр пырса, 1600 метра 2 минут та 19 секундӑра юртса тухать, пӗррмӗш приз илет. Ҫапла вара вӑл хӑйӗн халиччӗнхи рекордӗнчен 3 секунд маларах чупса тухнӑ. «Чижик» ӑйӑра Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн лаша ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен управленийӗн начальникӗ Мельников юлташ ларса тытса пырать. Иртнӗ ҫулхи ӑмӑртура «Аван» ятлӑ ӑйӑр «Чижикран» питӗ ҫӑмӑл иртсе кайнӑччӗ. Кӑҫал «Аван» ятлӑ ӑйӑр кая юлни ӑна чупма хӑнӑхтарманнинчен тата вӑл кӑҫал чуптару кампанине хутшӑнманнинчен килнӗ.

Ҫапла вара ҫак ӑмӑрту Сӑр шывӗ лешъенчи лаша завочӗн «Чижик» ятлӑ ӑйӑрӗ ытла та лайӑх тата хӑвӑрт юртнине кӑтартса пачӗ.

11 ӑмӑртура мала тухнӑ лаша хуҫисене тата ларса тытса пыракансене 8.000 тенкӗлӗх премисем панӑ.

Етӗрне районӗнчи пек ӑмӑрту июлӗн 1-мӗшӗнче Ҫӗрпӳ районӗнче пулса иртет.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ ятпа пулса иртекен ӑмӑртӑва районри ӑмӑртусенче пулнӑ капӑр лашанах Шупашкара илсе килмелле. Халӗ вӑл лашасене лайӑххрах пӑхмалла тата чупма хӑнӑхтармалла.

Н. ВАСИЛЬЕВ.
Чӑваш АССР Наркомземӗн Ветеринари Управленийӗн главнӑй врачӗ.

СОЮЗНИКСЕН ҪАРӖСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ҪАРАТСА ПУХНӐ ҪӖНӖ ПУРЛӐХСЕНЕ ТУПНӐ

ЛОНДОН, июнӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗнчи корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Америка ҫарӗсем Германире рейхсбанкӑн Регенсбург хулинчи отделенийӗн подвалӗсенче гитлеровецсем Европӑра ҫаратса пухнӑ ҫӗнӗ пурлӑхсене тупнӑ. Ҫав пурлӑхсем шутӗнче ылттӑн тата кӗмӗл слитокӗсем, хаклӑ хутсем тата ытти тӗрлӗ хаклӑ япаласем пур. Унтах Прага хулинчи вырӑссен православнӑй чиркӗвӗн ылттӑн дарохранительници, ҫавӑн пекех тата ювелир мастерӗсем ылттӑнран тунӑ япаласем, сехетсем тата хаклӑ металл слитокӗсем тултарнӑ темиҫе ешӗк пур. Тупнӑ хаклӑ хутсем пурте тенӗ пекех Австрин халӑх фончӗ пулнӑ. Вӗсене Америка долларӗпе шутласан, виҫӗ миллиард долларлӑх пулать. Ылттӑн тата кӗмӗл слитокӗсемпе укҫасем ҫур миллиард долларлӑх ытла. Ювелир мастерӗсем тунӑ ылттӑн япаласене гитлеровецсем вилӗм лагерӗсене хупса лартнӑ ҫынсенчен [illegible]а-турта илнӗ пулнӑ.

КӖСКЕН

▲ Рио-де-Жанейрӑра официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тӑшман Бразилин 31 суту-илӳ судновне пӗтернӗ. Бразилин тинӗс-ҫар флочӗн икӗ карап пӗтнӗ.

▲ Белградра ҫав хулашӑн ҫапӑҫса вилнӗ красноармеецсене пытарнӑ тӗлте памятник лартнӑ. Вӑл памятнике, Югослави столицин халӑхӗ пуҫарса янипе, халӑх укҫипе тунӑ.

▲ Ҫурҫӗр Норвегири Киркенес хулинчи ҫынсем ҫав хулана нимӗҫ оккупацийӗнчен ирӗке кӑларнӑ ятпа тата вырӑс союзниксене тав тӑвас шутпа памятник лартма йышӑннӑ. Ҫав памятнике лартма кирлӗ укҫана Ҫурҫӗр Норвегири пӗтӗм халӑх хушшинче пухаҫҫӗ. Вӑл памятнике Совет Союзӗпе Норвеги чикки ҫывӑхӗнче лартаҫҫӗ. (ТАСС).

СССР Совет писателӗсен Союзӗн правленийӗ питех те паллӑ Совет поэчӗ, Казахстан халӑх акынӗ, Сталинла премисен лауреачӗ Джамбул Джабаев вилни ҫинчен пӗтӗм чунтан хуйхӑрса пӗлтерет.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен митингӗсем

ВӐРНАР. **(Хамӑр корр.).** Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзне Ленин орденӗпе наградӑлани ҫинчен калакан хыпара районри комсомолецсемпе ҫамрӑксем пысӑк хавасланӑхпа кӗтсе илчӗҫ. Ҫав майпа колхозсенче тата предприятисенче комсомолецсемпе ҫамрӑксен митингӗсем пулса иртеҫҫӗ.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра комсомолецсемпе ҫамрӑксен митингӗ пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. Митингра тухса каланӑ В. Быков, Г. Павлов тата А. Быков юлташсем колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксен паха ӗҫӗсене палӑртрӗҫ. Сурака вӑхӑтӗнче И. Федоров, И. Григорьев, П. Быков тата А. Николаев юлташсем ӗҫ нормине кулленех 170—175 процент тултарса пынӑ. Халӗ комсомолецсемпе ҫамрӑксем тырпулсене ҫумкурӑксенчен тасатас тӗлӗшпе хӗрсе ӗҫлеҫҫӗ.

Молотов ячӗпе тӑракан колхозра митинг пулса иртнӗ хыҫҫӑн комсомолецсем тырпулсене ҫумкурӑкӗнчен тасатас тӗлӗшпе ӗҫлеме ятарласа звено организациленӗ. Звено ӗҫлеме тытӑннӑ та 15 гектар тырпула ҫумкурӑкӗнчен тасатнӑ.

Комсомола наградӑланӑ ятпа нумаях пулмасть Вӑрнарта комсомол активӗн районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Унта ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ О. Давыдова юлташ сӑмах тухса каларӗ:

— Ҫак аслӑ наградӑна, — терӗ вӑл,— комсомола Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче Тӑван ҫӗршывшӑн питех те паха ӗҫсем тунӑшӑн тата совет ҫамрӑкӗсене Тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чӗререн парӑнса ӗҫлеме вӗрентсе ӳстернӗшӗн панӑ. Ҫак паха ҫитӗнӳре пирӗн ӗҫ те пур.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенче пирӗн организацирен 1850 комсомолец фронта тухса кайнӑ, вӑл шутран хӑйсен ирӗкӗпе 500 комсомолец кайнӑ. Тылри комсомолецсемпе ҫамрӑксем те фронта кирлӗ пек пулӑшса пычӗҫ. 1944 ҫулти алхуҫалӑх ӗҫӗсемшӗн пирӗн районри комсомолецсем ВЛКСМ Центральный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Халӗ пирӗн хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне татах та ӳстерес тесе, кӑҫал татах та тухӑҫлӑрах тырпул туса илес тесе тӑрӑшса ӗҫлес пулать.

Е. ВОЛКОВ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместителӗн — 2—89, секретар… 4—26, пропаганда пайӗн — …19, парти пурнӑҫ пайӗн 3—99, промышленность пайӗн — 3—97, алхуҫалӑх пайӗн — 3—89, рабселькорсен пайӗн — 0—67, … — 0—23.

НТ 00622 Типографи №1, Упр…ния поли… …мышлен… при СНК ЧА… Заказ №2. … Тираж 10.000